NIX
КОМ
СУП
п. Ибреси,
ул. Садовая, д. 7
/Дом быта/,
2 этаж, телефон:
2-22-62.
КРЕДИТ
www.nix.ru

Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРӲШĔН

Юнкун
2007 ç., ака, 4
27 /8945/№
Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ
электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

## РЕСПУБЛИКА ХЫПАРĔСЕМ

### Вак бизнесăн пысăк проблемисем

**ИРТНĔ** эрнере Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Сĕнтĕрвăрри районĕнче вак предпринимательлĕх кунне хутшăннă. Республика пуçлăхĕ предпринимательсемпе канашлу ирттернĕ, унта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, вырăнти предприятисен, организацисен тата учреждениСЕН ертӳçисем хутшăннă. Президент районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн кăтартăвĕсене тишкернĕ май, бизнесăн пĕчĕк формисене ăнăçлăн аталантарма чăрмантаракан проблемăсене татса парасси пирки çивĕч калаçнă.

### Республикăн çĕнĕ çар комиссарĕ

**ÇАК** кунсенче Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Чăваш Республикин çар комиссарне Александр Мокрушина, Раççей оборона министрĕн 2007 çулхи пуш уйăхĕн 3-мĕшĕнчи хушăвĕпе çак должноçа лартнăскере, йышăннă. ЧР Президенчĕн Администрацийĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх, А. Мокрушин 1958 çулта Украинăра çуралнă. Вăл Омскри командирсем хатĕрлекен аслă танк училищине, Бронетанк çарĕсен çар академийĕн факультетне тата РФ Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен Генеральнăй штабĕн академийĕн факультетне пĕтернĕ. Юлашки вăхăтра Киров облаçĕн çар комиссарĕн çумĕ пулса ĕçленĕ.

### Китаецсен чаплă концерчĕ

**ШУПАШКАРТА** «2007 çул – Китайăн Раççейри çулталăкĕ» Китай культурин фестивалĕн шайĕнче Китайăн «Восток» ятлă юрăпа ташăн патшалăх ансамблĕ хăйĕн искусствипе паллаштарнă. Чăвашсен оперăпа балет театрне чаплă концерта пухăннисене кунта килнĕ Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров тата РФ Патшалăх Думин çĕршывсен хушшинчи ĕçсен комитечĕн председателĕ Константин Косачев саламланă.

## ПРИКАЗ

### ВОЕННОГО КОМИССАРА ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ №23

30 марта 2007 года п. Ибреси

На основании Закона Российской Федерации «О воинской обязанности и военной службе», Указа Президента Российской Федерации, приказа Министра Обороны Российской Федерации и постановления главы Ибресинского района Чувашской Республики №110 от 9 марта 2007 года военным комиссариатом Ибресинского района проводится призыв граждан 1980-1989 годов рождения на военную службу в Вооруженные Силы Российской Федерации.

П р и к а з ы в а ю:

1. В период с 1 апреля по 31 июня 2007 года провести призыв граждан на военную службу в возрасте от 18 до 27 лет, не пребывающих в запасе и подлежащих в соответствии с Законом РФ «О воинской обязанности и военной службе» призыву на военную службу.
2. Работу призывной комиссии организовать с 10 апреля 2007 г.
3. Все граждане, подлежащие призыву, обязаны прибыть на призывной участок с документами и во время, указанное в повестках.
4. Руководителям предприятий, учреждений и организаций, главам сельских и городских поселений своевременно оповестить и представить призывников на призывной участок военного комиссариата в сопровождении лиц, ответственных за воинский учет.
5. Контроль за исполнением данного приказа возложить на начальника 2 отделения военного комиссариата Ибресинского района прапорщика Захарова А. Ю.

***С. ДАНИЛОВ,***
***военный комиссар Ибресинского района,***
***подполковник.***

## ЧĔНСЕ КАЛАНИ

**Хаклă ентешĕмĕрсем, Чăваш Республикинче пурăнакансем!**

Чăваш Енĕн ĕçчен халăхĕ хăйсен кил-çурчĕсене, урамсене, çулсене, картишсемпе скверсене ĕлĕкренех таса та тирпейлĕ тытма тăрăшнă. Çуркунне çитнĕ май, хĕл каçипе пуçтарăннă çӳп-çаппа пĕтĕм тасамарлăх куç умне тухса выртаççĕ.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш ен регион уйрăмĕ картишсен, урамсен, парксемпе скверсен территорийĕсене тасатас, ача-пăча вăййисемпе спорт площадкисене юсас, йывăççем лартас тĕлĕшпе 2007 çулхи пуш уйăхĕн 30-мĕшĕпе ака уйăхĕн 30-мĕшĕ хушшинче уйăхлăх ирттерет. Çак пархатарлă ĕçре эпир – парти членĕсемпе унпа пĕр майлисем – уйăхлăха йĕркелекенĕсем тата унта чи хастар хутшăнаканĕсем республикăра пурăнакан пур çынна та, ĕç коллективĕсене, çамрăксене, вĕренекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене, хисеплĕ ветерансене пирĕн йыша тăма тата субботниксемпе воскресниксене тухма чĕнсе калатпăр.

Тивĕçлĕ йĕрке тата тасалăх тăвассишĕн пурте пĕрле туслăн та пуçаруллăн ĕçлер!

Хамăрăн пĕрлехи çурта – тăван Чăваш Ене юратнине хамăрăн ĕçпе, тĕллевлĕ ĕçсемпе çирĕплетсе парар!

***«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш регион уйрăмĕн политканашĕ.***

## ПАРТИ ЧЛЕНĔСЕН ПУХĂВĔ ИРТРĔ

**«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Йĕпреçри «Южное» уйрăмĕн пухăвĕ иртрĕ. Асăннă уйрăмра партин 12 членĕ. Суйлав пухăвĕсем çак уйăхра кăна тытăнмалла-ха. «Пухăнса çитнĕ ыйтусене сӳтсе явма ĕçлĕ тĕлпулу ирттерни кирлех», – тесе шутларĕç парти членĕсем.**

Пухăва пуçламăш уйрăм секретарĕ Римма Тимофеевна Кузнецова чĕннипе «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» районти политканашăн секретарĕ В. Л. Михалик тата районти уйрăмăн ертӳçи Л. А. Иванова килнĕ.

Тĕлпулăва Р. Т. Кузнецова уçрĕ. Вăл пĕлтĕрхи раштавра Екатеринбург хулинче иртнĕ партин VII Съезчĕн материалĕсемпе паллаштарчĕ. Унтан В. Л. Михалик «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» кулленхи ĕçĕсем, пирĕн района патшалăх паракан пулăшусем çинчен каласа кăтартрĕ.

«Южное» пуçламăш уйрăмра тăракан В. К. Гордеев та (вăл çавăн пекех партин районти политканашăн членĕ те) калаçуран юлмарĕ. Василий Константинович, районти суйлав комиссийĕн председателĕ пулнă май, Патшалăх Думин кăçалхи раштавра иртекен суйлавĕ, унăн уйрăмлăхĕсем çинчен ăнлантарса пачĕ.

Йĕпреç поселокĕн урамĕсенчи çӳп-çаппа тасамарлăха пуçтарасси те çивĕч ыйту. «Тавралăха типтерлĕ тытасси пуçлăхсенчен, предприятисен ертӳçисенчен кăна мар, пĕтĕм çынсенчен килет», – терĕç пухура. Çав шухăша палăртрĕ хăйĕн сăмахĕнче «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти членĕ Роза Ивановна Ильина, «Росгосстрах- Поволжье» страхлакан предприятин Йĕпреçри уйрăмĕн пуçлăхĕ.

Пухура пулнă Светлана Леонидовна Московкинапа Надежда Дмитриевна Хохлова «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партие кĕме заявлени çырса пачĕç.

***Л. ИВАНОВА,***
***«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин***
***Йĕпреçри ĕçтăвкомĕн ертӳçи.***

## ÇУЛ-ЙĔР ПУРИНЧЕН ТЕ ПЫСĂК ТИМЛĔХ ЫЙТАТЬ

**Çулленех çак вăхăталла районта çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕпе канашлу ирттересси йăлана кĕнĕ. Нумаях пулмасть район администрацийĕн ларусен залĕнче иртнĕ водительсен пухăвне предприятисемпе организацисен, автохуçалăхсен ертӳçисем те хутшăнчĕç.**

Пухăннисем умĕнче кун йĕркинчи ыйтупа чи малтан çул çӳревĕн хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ В. И. Андреев доклад туса пачĕ. (Докладпа хаçатăн çитес номерĕнче паллаштаратпăр).

Районти çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн проблемине сӳтсе явма районти çар комиссарĕ С. Ю. Даниловпа РОСТО районти организацийĕн ертӳçи А. К. Квасов та хутшăнчĕç. Вĕсен калаçăвĕнче водительсем хатĕрлес ыйту тĕп вырăн йышăнчĕ. Сăмахран, иртнĕ çулта 45 призывник çар комиссариачĕ направленийĕпе Шупашкарти вĕрентӳ организацийĕнче вĕренсе водитель удостоверенине илнĕ. Патшалăх водитель хатĕрлеме пĕр каччă пуçне вăтамран 25 пин тенкĕ тăкакланă. Çар ретне тăма хатĕрленекенсене çавăн пекех ытти специальноçсене алла илме пулăшаççĕ. РОСТО организацийĕнче пĕлтĕр тĕрлĕ категориллĕ 240 водитель хатĕрленĕ, вĕрентӳ базине çирĕплетме 4 единица транспорт хатĕрĕ, класс-лаборатори валли çĕнĕ оборудовани туяннă. Халĕ вырăнти РОСТОн автодром та пур.

Ял хуçалăх техникин патшалăх надзорĕн районти инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Ф. Гаврилов тракторсемпе прицепсене техосмотр витĕр кăларас, механизаторсене аттестацилес ыйтусем тавра чарăнса тăчĕ. Çак тĕслĕх кашнинех шухăшлаттармалла: ял тата хула тăрăхĕсенче уйрăм çынсен аллинче 216 единица трактор шутланать. Чылайăшĕ хăйсен техникине регистрациленĕ хыççăн темиçе çул ĕнтĕ техосмотр витĕр кăлармаççĕ.

Росгосстрахăн Йĕпреç поселокĕнчи страховани пайĕн пуçлăхĕ Р. И. Ильина канашлăва пухăннисене транспорт хатĕрĕсене тата водительсене страхламалли йĕркесем çинчен каласа пачĕ. Район больницин наркологи уйрăмĕн ĕçченĕ М. В. Николаева водительсене медицина тĕлĕшĕнчен тĕрĕслес ыйтупа тухса калаçрĕ. Иртнĕ çулта çул çинче тытса чарнă 158 водительрен 91-шĕ эрех ĕçнине палăртнă, кăçалхи 2 уйăхра тĕрĕсленĕ 27 водительрен 19-шĕ руль умне ӳсĕр пуçпа ларнине çирĕплетнĕ. ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Р. Г. Июдина ĕç сыхлавĕн хăрушсăрлăхĕ пирки чарăнса тăчĕ.

***/ХАМĂР ИНФ./.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

В прекрасный весенний день мы от всей души поздравляем с замечательным юбилеем, 50-летием, нашу дорогую, милую **АНДРИАНОВУ Любовь Арсентьевну,** проживающую в п. Ибреси. Желаем крепкого здоровья, любви, тепла, удачи, всего того, что называется счастьем.

Аромат всех цветов и румянец зари
Мы готовы тебе в этот день подарить.
Нежность роз поутру, свет, тепло, доброту,
Много ласковых слов и земную любовь.
Все, что светлое есть и святое в судьбе,
Мы желаем, родная, сегодня тебе!

***С любовью ПОДРУГИ, СОСЕДИ, ДРУЗЬЯ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклă çыннăмăрсене, çуратса ӳстерсе, ăс-тăн парса пурнăç çулĕ çине кăларнă, мăшăрлантарса, телей пиллесе тăван йăваран «вĕçтерсе» кăларнă анне-аттене – Костер поселокĕнче пурăнакан **Галина Васильевнапа Фридрих Андреевич ШАРШЕВИЧСЕНЕ** – пĕтĕм чун-чĕререн юратса, чи ăшă та çепĕç сăмахсем каласа пĕрлешсе çемье чăмăртанăранпа 45 çул çитнĕ ятпа саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе ӳлĕмрен те çапла килĕшӳллĕн утма, йывăрлăхсене пĕрлех çĕнтерсе пыма, телейсавăнăçне çурмалла пайласа пурăнма ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-халпа телей, шăранса тăракан хĕвел пек хĕрӳллĕ юратупа килĕшӳ сунатпăр.

***2 ЫВĂЛĔПЕ КИНĔСЕМ, ХĔРĔПЕ КĔРӲШĔ, 8 МĂНУКĔ, МĂНУКĔСЕН 2 АЧИ, ХĂТИСЕМПЕ ТĂХЛАЧИСЕМ, ИШУТКИНСЕМ.***

## ВНИМАНИЮ ГЛАВ ПОСЕЛЕНИЙ, РУКОВОДИТЕЛЕЙ ПРЕДПРИЯТИЙ, ОРГАНИЗАЦИЙ, УЧРЕЖДЕНИЙ, ШКОЛ, ЖИТЕЛЕЙ

**4, 5, 6 апреля в Ибресинском районе объявляется предпасхальный субботник по очистке и благоустройству населенных пунктов, улиц, скверов, площадей и территорий жилых домов.**

**Просим каждого жителя принять активное участие в наведении чистоты и порядка.**

## ПРЕЗЕНТАЦИ

**Раççей Президенчĕ В. В. Путин палăртнă тĕп задачăсенчен пĕри вăл – Раççей обществинче меценатлăхпа ыр кăмăллăх идеалĕсене сарма пулăшакан чи лайăх йăлайĕркесене тепĕр хут çул пани. Хальхи вăхăтра çакă пĕтĕмĕшле наци идейи пулса тăчĕ. Хăйсен ырă та мухтавлă ĕçĕсемпе ĕмĕрсене кĕрсе юлнă çынсен ячĕсене упраса хăварассине «Çĕр çуллăх меценачĕсем» меценатлăхпа ыр кăмăллăх фончĕ хăй çине илнĕ. Иртнĕ ĕмĕрти Аслă меценатсене халалласа тăвакан «Тĕнчен ырă пирĕштийĕ» архитектурăпа парк комплексĕ паянхи Раççейĕн Тĕп наци проекчĕ шутланать. Вăл Раççей историйĕнче çутă йĕр хăварнă çынсен ячĕсене ĕмĕр-ĕмĕр асăнса пурăнма хистет.**



# ЫРĂ ЙĂЛАСЕМ ÇУЛ ТУПАÇÇĔ

«Тĕнчен ырă пирĕштийĕ» комплекс архитектурăпа парк ансамблĕнчен тăрать, унăн никĕсĕнче çӳлерех асăннă фондăн чи пысăк наградиʼ – меценатăн «Ылтăн çăлтăрĕ» мрамор колоннăна пирĕштин ылтăн кĕлетки илем кӳрсе тăрать, вăл хăйĕн аллине çĕр чăмăрĕн символне пĕтĕмлетекен кăвакарчăна тытса тăрать.

Комплекс тăвассипе çыхăннă проекта Раççей тава тивĕçлĕ художникĕ П. Г. Стронский тата асăннă фонд президенчĕ О. В. Олейник туса хатĕрленĕ.

Асăну комплексĕ тăвас ĕç паллă тĕп çыннисем, политиксем, бизнесменсем, культура, наука, вĕрентӳ деятелĕсем, Раççей шăпишĕн çунакан ахаль патриотсем ырласа йышăннă. Мухтавлă эстафетăна Раççейри 50 ытла хулара илнĕ, вĕсен йышĕ кунран кун ӳссе пырать. Çак списока хамăрăн республика та пурри пире савăнтарать. Н. В. Федоров Президент çак шухăша пуринчен малтан ырласа йышăнаканĕ пулчĕ. Çывăх вăхăтрах Чăваш Енĕн тĕп хулинче Аслă Раççей меценачĕсене халалланă комплекс уçăлмалла. Пуçару çула тухрĕ ĕнтĕ. Ырă пирĕшти тăван республика çийĕн хăйĕн çунаттисене сарать. Ырă та пархатарлă юхăмран йĕпреçсем те юлмаççĕ. 2007 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче Йĕпреç поселокĕнчи парк комплексĕ уçма палăртнă вырăнта чул хывса хăварнă ятпа савăнăçлă уяв иртрĕ. Комплекс коммунистсем иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсен варринче аркатнă Йĕпреçри чиркӳ пулнă вырăнта çĕкленĕ.

Хумханулла самант. Никĕс вырăнĕнчи чул çинчен симĕс шăналăк сирĕлет те, парка килнисен куçĕ умне чул çине çырнă çак сăмахсем «шуса» тухаççĕ: «Камень сей заложен в основание архитектурно-паркового комплекса «Добрый Ангел мира» Фондом «Меценаты столетия» и администрацией Ибресинского района и правлением воинов-интернационалистов».

Савăнăçлă уявра 500 ытла çын пулчĕ. Çак ятпа пухăннисене район пуçлăхĕ А. И. Петров, Фондăн ятарлă проектсемпе ĕçлекен Департаменчĕн ертӳçи С. А. Слесарев, ЧР Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Г. П. Чернова саламларĕç. Йĕпреçри Никольски чиркĕвĕн настоятелĕ Петĕр атте çав чула Турă шывĕпе сăвапларĕ. Тĕн çыннисем: Петĕр атте (П. Г. Иванов), Пантелеймон атте (П. Н. Пегасов), Леонид атте (Л. А. Иванов) çав кун меценатлăхпа ыр кăмăллăх фончĕн «Çĕр çинчи пурнăçшăн» медальне илме тивĕçрĕç.

Çакăн хыççăн хăнасем, кану паркне килнĕ ытти çынсем Йĕпреçри культура çуртне çул тытрĕç. Кунта чыслав малалла тăсăлчĕ. «Çĕр çуллăх» меценачĕсем» фондăн наградисене пирĕн районта пурăнакан вун-вун çын – педагогсем, воспитательсем, нумай ачаллă амăшĕсем, социаллă ĕçченсем, предпринимательсем, уйрăм предприятисен ертӳçисем, пĕтĕмлетерех каласан, ыр кăмăллăх юхăмне хутшăнса, хăйсен тӳпине хывакансем тивĕçнĕ. Вĕсене «Çĕр çинчи пурнăçшăн», «Ыр кăмăллăхшăн», «Чыс тата пархатар» медальсемпе, «Наци мухтавĕ» орденпа, «Ĕçшĕн» Хисеп грамотипе наградăланă.

«Çĕр çуллăх меценачĕсем» меценатлăхпа ыр кăмăллăх фончĕн наградисене илнĕ çынсем çине пăхса ларнă май, пуçа пархатарлă шухăш иленчĕ: пирĕн çĕршывра пулăшу кĕтекенсене тараватлăн алă тăсса парасси ӳлĕмрен те çирĕпленсех пырĕ, çакăн пек мухтавлă çынсем йышланнипе ĕнтĕ Раççей çĕр çинчи чи хăватлă держава пуласси пĕрре те иккĕлентермест.

***Г. КУЗНЕЦОВ.***



**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** *Йĕпреçри Культура çурчĕ çумĕнчи кану паркĕнче яваплă çынсен ушкăнĕ «Çĕр çуллăх меценачĕсем» фондăн архитектурăпа парк комплексĕн чулне уçнă самант; çак вырăнта ӳлĕмрен комплекс пулĕ.*

***Н. РАЙМОВ сăнӳкерчĕкĕсем.***

## СВОДНЫЙ ГРАФИК

**проведения государственного технического осмотра автотранспортных средств Ибресинского района на 2007 год**

| Наименование автохозяйств | Дата и время проведения |
|---|---|
| Администрация района | 6.04. 10 час. |
| Пенсионный фонд | 6.04. 10 час. |
| РГУП «Аптека №39» | 6.04. 10 час. |
| Управление образования | 6.04. 10 час. |
| Центр занятости населения | 6.04. 10 час. |
| ООО «РГС-Поволжье» | 6.04. 10 час. |
| Редакция райгазеты | 6.04. 10 час. |
| БТИ | 6.04. 11 час. |
| СПК «Сельэнерго» | 6.04. 11 час. |
| РОСТО | 6.04. 11 час. |
| Ибресинское городское поселение | 6.04. 10 час. |
| ПНИ | 6.04. 10 час. |
| Семенная инспекция | 6.04. 10 час. |
| ООО «Ибресигаз» | 6.04. 10 час. |
| ЦРБ | 6.04. 11 час. |
| ПЧ-28 УГПС МЧС | 6.04. 10 час. |
| ХПП | 6. 04. 12 час. |
| ОАО «Молокозавод» | 6.04. 13 час. |
| ОФК МФ РФ по ЧР | 6.04. 10 час. |
| СХПК им. Калинина | 13.04. 10 час. |
| Колхоз «Трудовик» | 20.04. 10 час. |
| Колхоз «Путиловка» | 20.04. 11 час. |
| Колхоз им. Кирова | 20.04. 10 час. |
| Колхоз «Кр. партизан» | 13.04. 12 час. |
| Колхоз «Красный фронтовик» | 27.04. 10 час. |
| Колхоз «Искра» | 27.04. 14 час. |
| ОАО «Рассвет» | 27.04. 12 час. |
| Колхоз им. Ильича | 4.05. 10 час. |

## ГРАФИК

**проведения публичных слушаний по отчетам об бюджетов городского и сельских поселений за**

| № п/п | Наименование поселения | Дата | Место проведе слушаний |
|---|---|---|---|
| 1. | Айбечское сельское | 16.04.2007 | Айбечский СДК |
| 2. | Андреевское сельское | 16.04.2007 | администрация Андреевского с/ |
| 3. | Березовское сельское | 16.04.2007 | Березовский СД |
| 4. | Большеабакасинское сельское | 16.04.2007 | Большеабакасин СДК |
| 5. | Кировское сельское | 16.04.2007 | Бугуянский СДК |
| 6. | Климовское сельское | 16.04.2007 | Климовский СД |
| 7. | Малокармалинское сельское | 16.04.2007 | администрация Малокармалинск с/п |
| 8. | Новочурашевское сельское | 16.04.2007 | Новочурашевски СДК |
| 9. | Хормалинское сельское | 16.04.2007 | Хормалинский С |
| 10. | Чувашско-Тимяшское сельское | 16.04.2007 | Чувашско-Тимяшский СДК |
| 11. | Ширтанское сельское | 16.04.2007 | Ширтанский КО |
| 12. | Буинское сельское | 16.04.2007 | Буинский СДК |
| 13. | Ибресинское городское | 16.04.2007 | Зал заседаний а нистрации район |

**УВАЖАЕМЫЕ РЕКЛАМОДАТЕЛИ!**

**Делайте бизнес с нами. Реальный тираж, реальная реклама.**

**Телефоны: 2-11-92, 2-11-97.**

## ХĂШ КĔНЕКЕСЕМ КИЛĔШЕÇÇĔ?

Тури Кĕлешкасси библиотекинче «Литературăллă Чăваш Ен: çулталăк кĕнеки, 2005 çул» акци иртрĕ. Вăл пынă вăхăтра виçĕм çул пирĕн библиотекăри чăвашла тата вырăсла, çавăн пекех ача-пăча валли çырнă кĕнекесенчен хăшĕсене вулакансем ытларах кăмăлланине палăртмалла пулчĕ. Çав акцие хутшăннă кĕнекесен куравне йĕркелерĕмĕр, «Паллаштару сехечĕсем» иртрĕç. Вулакансен хушшинче ыйтăм иртттерни те пулăшрĕ. Пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн Василий Алентейĕн «Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт» пуринчен ытларах кăмăла кайни палăрчĕ. Çавăн пекех Денис Гордеевăн «Пăсташ», Сергей Павловăн «Тан таппи» кĕнекисене юратса вулакансем те сахалăн пулмарĕç.

***А. ИВАНОВА, библиотекăра ĕçлекен.***

## ПĔЧĔК АРТИСТСЕН УЯВĔНЧЕ

Пĕтĕм тĕнчери Театр кунне халалласа Çĕнĕ Выçлири пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта уяв иртрĕ. Унта 3-9 класри ачасем активлă хутшăнчĕç. Кашни класс тĕрлĕрен сценкăсем, пьеса сыпăкĕсем хатĕрленĕ. Куракансене уйрăмах 8 тата 9 класри ачасен «Баланс тухрĕ», «Ункă хĕрринчи метро» пьесăсен сыпăкĕсем килĕшрĕç. Уява пухăннисене «Пĕчĕк çăлтăрсем» пултарулăх ушкăнĕ вара ташă-юрăсемпе хавхалантарса пычĕ.

***Т. ИЛЬИНА, шкулти аслă вожатăй.***

# СООБЩЕНИЕ

Администрация Чувашско-Тимяшского сельского поселения Ибресинского района Чувашской Республики сообщает, что согласно решению общего собрания от 04.08.2006 г. протокол №1 собственников земельных долей, земельные участки, сформированные в счет земельных долей умерших граждан (список прилагается), а также невостребованных земельных долей (список прилагается), находится в следующих полях колхоза имени Ильича:

- 1 участок 1 поля севооборота 1 площадью 46 га.
- 3 участок 1 поля севооборота 1 площадью 13,2 га.
- 4 участок 1 поля севооборота1 площадью 11,5 га.
- 1,2,3,4,5 поля почвозащитного севооборота площадью 93,5 га.
- 1 участок 2 поля севооборота 2 площадью 111,6 га.
- 1 участок 3 поля севооборота 2 площадью 82 га.
- 1 участок 6 поля севооборота 2 площадью36,1 га
- Запольный участок площадью 6,6 га.

## СПИСОК

**умерших собственников земельных долей**

| ФИО | Места жительства |
|---|---|
| 1. Раймова Васса Тарасовна | с.Чувашские Тимяши |
| 2.Михайлова Раиса Михайловна | с.Чувашские Тимяши |
| 3.Нетейкин Леонид Геннадьевич | с.Чувашские Тимяши |
| 4.Пименова Акулина Петровна | с.Чувашские Тимяши |
| 5.Данилова Клавдия Тарасовна | с.Чувашские Тимяши |
| 6.Димитриева Нина Петровна | с.Чувашские Тимяши |
| 7.Иванова Мария Никифоровна | с.Чувашские Тимяши |
| 8.Васильева Перасковия Марковна | с.Чувашские Тимящи |
| 9.Кузьмина Валентина Федоровна | с.Чувашские Тимяши |
| 10.Кузьмин Иван Яковлевич | с.Чувашские Тимяши |
| 11.Илларионова Валентина Ивановна | с.Чувашские Тимяши |
| 12.Алексеев Петр Дмитриевич | с.Чувашские Тимяши |
| 13.Алексеев Леонид Петрович | с.Чувашские Тимяши |
| 14.Тимофеев Николай Романович | с.Чувашские Тимяши |
| 15.Николаева Мария Ильинична | с.Чувашские Тимяши |
| 16.Сюдамова Валентина Константиновна | с.Чувашские Тимяши |
| 17.Максимов Марк Яковлевич | с.Чувашские Тимяши |
| 18.Яковлева Екатерина Яковлевна | с.Чувашские Тимяши |
| 19.Давыдов Аркадий Кириллович | с.Чувашские Тимяши |
| 20.Давыдова Христина Григорьевна | с.Чувашские Тимяши |
| 21.Иванова Ульяна Ивановна | с.Чувашские Тимяши |
| 22.Никитин Василий Андреевич | с.Чувашские Тимяши |
| 23.Кузнецова Васса Семеновна | с.Чувашские Тимяши |
| 24.Иванов Владислав Владимирович | с.Чувашские Тимяши |
| 25.Михайлова Клавдия Михайловна | с.Чувашские Тимяши |
| 26.Титушин Алексей Васильевич | с.Чувашские Тимяши |
| 27.Титушин Василий Константинович | с.Чувашские Тимяши |
| 28.Давыдов Сидор Иванович | с.Чувашские Тимяши |
| 29.Давыдова Раиса Викторовна | с.Чувашские Тимяши |
| 30.Чугарова Анастасия Константиновна | с.Чувашские Тимяши |
| 31.Федулова Клавдия Романовна | с.Чувашские Тимяши |
| 32.Антонов Николай Васильевич | с.Чувашские Тимяши |
| 33.Николаева Зоя Антоновна | с.Чувашские Тимяши |
| 34.Данилов Яков Данилович | с.Чувашские Тимяши |
| 35.Павлова Ольга Павловна | с.Чувашские Тимяши |

| | |
|---|---|
| 64.Васильева Юлия Федоровна | с.Чувашские Тимяши |
| 65.Васильев Валентин Александрович | с.Чувашские Тимяши |
| 66.Иванова Юлия Григорьевна | с.Чувашские Тимяши |
| 67.Краснов Егор Сергеевич | с.Чувашские Тимяши |
| 68.Давыдов Василий Сергеевич | с.Чувашские Тимяши |
| 69.Давыдова Валентина Ильинична | с.Чувашские Тимяши |
| 70.Пашкова Ангелина Ефимовна | с.Чувашские Тимяши |
| 71.Григорьев Юрий Варсанофьевич | с.Чувашские Тимяши |
| 72.Гордеев Сергей Афанасьевич | с.Чувашские Тимяши |
| 73.Григорьева Любовь Андреевна | с.Чувашские Тимяши |
| 74.Одинцов Михаил Николаевич | с.Чувашские Тимяши |
| 75.Маркова Евгения Марковна | с.Чувашские Тимяши |
| 76.Семенова Ольга Семеновна | с.Чувашские Тимяши |
| 77.Анисимова Лидия Семеновна | с.Чувашские Тимяши |
| 78.Краснов Дмитрий Сергеевич | с.Чувашские Тимяши |
| 79.Иванов Федор Иванович | с.Чувашские Тимяши |
| 80.Анисимов Геннадий Кириллович | с.Чувашские Тимяши |
| 81.Чугарова Мария Афанасьевна | с.Чувашские Тимяши |
| 82.Федотова Анисия Федотовна | с. Чувашские Тимяши |
| 83.Краснов Василий Степанович | с.Чувашские Тимяши |
| 84.Алексеева Анна Алексеевна | с.Чувашские Тимяши |
| 85.Потапова Клавдия Кирилловна | с.Чувашские Тимяши |
| 86.Спиридонов Николай Борисович | с.Чувашские Тимяши |
| 87.Фролова Александра Трофимовна | с.Чувашские Тимяши |
| 88.Михайлов Павел Михайлович | с.Чувашские Тимяши |
| 89.Данилова Галина Александровна | с.Чувашские Тимяши |
| 90.Раймов Николай Витальевич | с.Чувашские Тимяши |
| 91.Сарамова Анна Николаевна | с.Чувашские Тимяши |
| 92.Спиридонова Клавдия Васильевна | д.Русские Тимяши |
| 93.Алексеев Сергей Степанович | д.Русские Тимяши |
| 94.Алексеева Клавдия Алексеевна | д.Русские Тимяши |
| 95.Быстрова Анна Ивановна | д.Русские Тимяши |
| 96.Иванова Капитолина Васильевна | д.Русские Тимяши |
| 97.Храмкина Зинаида Ильинична | д.Русские Тимяши |
| 98.Ручков Василий Георгиевич | д.Русские Тимяши |
| 99.Афанасьева Лидия Васильевна | д.Русские Тимяши |
| 100.Дементьева Мария Сергеевна | д.Русские Тимяши |
| 101.Петров Александр Алексеевич | д.Русские Тимяши |
| 102.Петрова Раиса Матвеевна | д.Русские Тимяши |
| 103.Павлов Федор Дмитриевич | д.Русские Тимяши |
| 104.Мясникова Нина Дмитриевна | д.Русские Тимяши |
| 105.Тимофеева Феодосия Кирилловна | д.Русские Тимяши |
| 106.Титушин Константин Васильевич | д.Русские Тимяши |

| | |
|---|---|
| 107.Матвеева Нина Федоровна | д.Русские Тимяши |
| 108.Пакина Ольга Семеновна | с.Хомбусь Батырево |
| 109.Степанов Афанасий Степанович | с.Хомбусь Батырево |
| 110.Иванов Василий Александрович | с.Хомбусь Батырево |
| 111.Сильвестров Руф Семенович | с.Хомбусь Батырево |
| 112.Виноградова Любовь Петровна | с.Хомбусь Батырево |
| 113.Иванова Зинаида Ивановна | с.Хомбусь Батырево |
| 114.Данилов Виталий Федорович | с.Хомбусь Батырево |
| 115.Зайцева Матрена Константиновна | с.Хомбусь Батырево |
| 116.Смирнов Геннадий Николаевич | с.Хомбусь Батырево |
| 117.Смирнова Мария Акимовна | с.Хомбусь Батырево |
| 118.Пакина Мария Семеновна | с.Хомбусь Батырево |
| 119.Иванова Елена Федотовна | с.Хомбусь Батырево |
| 120.Зайцев Александр Тимофеевич | с.Хомбусь Батырево |
| 121.Карпов Анатолий Константинович | с.Хомбусь Батырево |
| 122.Сундукова Анастасия Николаевна | с.Хомбусь Батырево |
| 123.Андреев Яков Николаевич | с.Хомбусь Батырево |
| 124.Петрова Вера Фирсовна | с.Хомбусь Батырево |
| 125.Васильева Зинаида Максимовна | с.Хомбусь Батырево |
| 126.Низинькова Александра Никифоровна | с.Хомбусь Батырево |
| 127.Тарасов Владимир Николаевич | с.Хомбусь Батырево |
| 128.Тарасова Анастасия Ивановна | с.Хомбусь Батырево |
| 129.Тереньев Петр Иванович | с.Хомбусь Батырево |
| 130.Карпова Галина Ивановна | с.Хомбусь Батырево |
| 131.Атамов Николай Федорович | с.Хомбусь Батырево |
| 132.Акимова Ульяна Григорьевна | с.Хомбусь Батырево |
| 133.Васильева Раиса Александровна | с.Хомбусь Батырево |
| 134.Клементьев Михаил Кузьмич | с.Хомбусь Батырево |
| 135.Анисимова Анна Михайловна | с.Хомбусь Батырево |
| 136.Федоров Иван Васильевич | с.Хомбусь Батырево |
| 137.Андреева Вера Васильевна | с.Хомбусь Батырево |
| 138.Петров Захар Андреевич | с.Чувашские Тимяши |
| 139. Михайлов Николай Афанасьевич | с.Чувашские Тимяши |
| 140.Анисимов Василий Кириллович | с.Чувашские Тимяши |
| 141.Филиппова Александра Андреевна | с.Чувашские Тимяши |
| 142.Куракова Елизавета Александровна | д.Русские Тимяши |
| 143.Зайцева Мария Алексеевна | с.Хомбусь Батырево |
| 144.Федотова Вера Федоровна | с.Хомбусь Батырево |
| 145.Андреев Владимир Федорович | с.Хомбусь Батырево |
| 146.Терентьева Надежда Даниловна | с.Хомбусь Батырево |
| 147.Михайлова Матрена Ивановна | с.Хомбусь Батырево |
| 148.Степанова Клавдия Кузьминична | с.Хомбусь Батырево |
| 149.Степанов Михаил Ефимович | с.Хомбусь Батырево |
| 150.Прокопьева Мария Николаевна | с.Хомбусь Батырево |
| 151.Прокопьев Константин Ефимович | с.Хомбусь Батырево |
| 152.Атамов Николай Гаврилович | с.Хомбусь Батырево |
| 153.Петрова Зоя Ивановна | с.Хомбусь Батырево |
| 154.Карпов Николай Яковлевич | с.Хомбусь Батырево |
| 155.Тумаланова Клавдия Никандровна | д.Русские Тимяши |
| 156.Карпова Мария Яковлевна | с.Хомбусь Батырево |
| 157.Осипов Василий Васильевич | с.Чувашские Тимяши |
| 158.Михайлов Лев Демьянович | с.Чувашские Тимяши |

| | |
|---|---|
| 181.Романова Федосия Ильинична | с.Чувашские Тимяши |
| 182.Моисеева Клавдия Павловна | с.Чувашские Тимяши |
| 183.Федулова Анисия Сидоровна | с.Чувашские Тимяши |
| 184.Филиппов Афанасий Тимофеевич | с.Чувашские Тимяши |
| 185.Филиппова Марфа Романовна | с.Чувашские Тимяши |
| 186.Чугарова Клавдия Аверкиевна | с.Чувашские Тимяши |
| 187.Матвеев Федор Матвеевич | с.Чувашские Тимяши |
| 188.Матвеева Мария Корниловна | с.Чувашские Тимяши |
| 189.Сенцова Мария Федоровна | с.Чувашские Тимяши |
| 190.Кириллова Клавдия Кузьминична | с.Чувашские Тимяши |
| 191.Романова Елена Давыдовна | с.Чувашские Тимяши |
| 192.Терентьев Федот Терентьевич | с.Чувашские Тимяши |
| 193.Иванова Татьяна Ивановна | с.Чувашские Тимяши |
| 194.Лукина Пелагея Григорьевна | с.Чувашские Тимяши |
| 195.Раймов Василий Егорович | с.Чувашские Тимяши |
| 196.Анисимов Михаил Кириллович | с.Чувашские Тимяши |
| 197.Сарамова Пелагея Семеновна | с.Чувашские Тимяши |
| 198.Захарова Феодосия Никифоровна | с.Чувашские Тимяши |
| 199.Филиппова Васса Матвеевна | с.Чувашские Тимяши |
| 200.Иванова Мария Степановна | с.Чувашские Тимяши |
| 201.Гордеева Надежда Сергеевна | с.Чувашские Тимяши |
| 202.Давыдова Клавдия Васильевна | с.Чувашские Тимяши |
| 203.Никитина Фекла Алексеевна | с.Чувашские Тимяши |
| 204.Давыдов Кирилл Иванович | с.Чувашские Тимяши |
| 205.Давыдова Евгения Петровна | с.Чувашские Тимяши |
| 206.Егорова Зинаида Ивановна | с.Чувашские Тимяши |
| 207.Пименов Зиновий Петрович | с.Чувашские Тимяши |
| 208.Федулов Василий Гаврилович | с.Чувашские Тимяши |
| 209.Чугарова Васса Емельяновна | с.Чувашские Тимяши |
| 210. Осипова Зинаида Ильинична | с.Чувашские Тимяши |
| 211.Иванов Георгий Трофимович | с.Чувашские Тимяши |
| 212.Яковлева Акулина Агеевна | с.Чувашские Тимяши |
| 213.Тимофеев Александр Тимофеевич | с.Чувашские Тимяши |
| 214.Никитина Анастасия Федоровна | с.Чувашские Тимяши |
| 215.Павлов Дмитрий Федорович | с.Чувашские Тимяши |
| 216.Германова Зинаида Ермолаевна | с.Чувашские Тимяши |
| 217.Хиркина Нина Игнатьевна | с.Хомбусь Батырево |
| 218.Иванов Сергей Федотович | с.Хомбусь Батырево |
| 219.Атамова Мария Тимофеевна | с.Хомбусь Батырево |
| 220.Трофимова Анна Федоровна | с.Хомбусь Батырево |
| 221.Артемьева Нина Артемьевна | с.Хомбусь Батырево |
| 222.Сильвестрова Фекла Ануфриевна | с.Хомбусь Батырево |
| 223.Никифорова Мария Степановна | с.Чувашские Тимяши |

| | |
|---|---|
| 224.Петрова Матрена Петровна | с.Хомбусь Батырево |
| 225.Абрамова Фекла Васильевна | с.Хомбусь Батырево |
| 226.Михайлова Мария Федоровна | с.Хомбусь Батырево |
| 227.Тарасова Варвара Васильевна | с.Хомбусь Батырево |
| 228.Карпова Мария Егоровна | с.Хомбусь Батырево |
| 229.Прокопьева Дария Филипповна | с.Хомбусь Батырево |
| 230.Сергеев Порфирий Сергеевич | с.Хомбусь Батырево |
| 231.Петров Аркадий Петрович | с.Хомбусь Батырево |
| 232.Карпова Анисия Федоровна | с.Хомбусь Батырево |
| 233. Матвеева Ульяна Васильевна | с.Хомбусь Батырево |
| 234. Афанасьев Николай Кузьмич | с Хомбусь Батырево |
| 235. Герасимова Мария Герасимовна | с.Хомбусь Батырево |
| 236.Карпова Клавдия Сергеевна | с.Хомбусь Батырево |
| 237. Матвеев Рюрик Федорович | с.Хомбусь Батырево |
| 238. Карпова Клавдия Константиновна | с.Хомбусь Батырево |
| 239. Карпов Андрей Игнатьевич | с.Хомбусь Батырево |
| 240. Григорьева Мария Алексеевна | с.Хомбусь Батырево |

## СПИСОК

**невостребованных земельных долей колхоза имени Ильича Ибресинского района ЧР**

| ФИО | Места жительства |
|---|---|
| 1. Соснов Сергей Анатольевич | г. Сургут |
| 2. Иванова Альбина Васильевна | Канашский район |
| 3. Корнилова Екатерина Максимовна | г. Чебоксары |
| 4. Давыдов Владимир Васильевич | Канашский район |

Если вышеуказанные собственники земельных долей и наследники умерших собственников земельных долей в течение 90 дней со дня опубликования данного сообщения не заявят о своем желании воспользоваться правами участника долевой собственности, то, в соответствии со ст.4 Закона Чувашской Республики «Об обороте земель сельскохозяйственного назначения», Минимущество Чувашии вправе обратиться в суд с заявлением о признании права собственности Чувашской Республики на эти земельные участки. В случае отказа Чувашской Республики от подобного обращения в суд, с заявлением о признании права собственности на эти земельные участки может обратиться Администрация Ибресинского района или администрация Чувашско-Тимяшского сельского поселения.

**Претензии по месту расположения земельных участков просим направлять в администрацию Чувашско-Тимяшского сельского поселения.**

## САЛАМЛАТПĂР

Çут тĕнчери çывăхран та çывăх çыннăмăра – хĕрĕме, кинĕме, мăшăра, аннене – **Роза Васильевна ДОМИКОВАНА** (Пысăк Упакасси) çурхи тĕнче чĕрĕлĕвĕпе пĕр вăхăтра килнĕ савăк кун ячĕпе, çуралнăранпа 45 çул çитнĕ ятпа, ушкăнпа яракан салам ака уйăхĕн хĕвелĕнчен те хĕрӳрех, кăнтăртан вĕрекен çил ачашлăхĕнчен те çепĕçрех пултăр, аллунти телей курки чăмппи тултăр, сăн-питӳ яланах савăк кулăпа çуталтăр.



Эсĕ пирĕнпе юнашарах пулни, пирĕн савăнăçсемпе хуйха-суйха пĕрлех пайлани пире вăй-хал хушса хавхалантарать, чун-чĕресене çĕнĕ шанăç парса тăрать.

Хаклă çыннăмăрпа пĕр вăхăтрах унăн хĕрĕ, Оля та 18 çула çитнине паллă тăвать. Чечеклĕ çамрăклăх çеçки кирек хăçан та илем кӳрсе тăтăр, малтан та малалла çĕкленсе туртăнтăр. Çуркунне хаваслăхĕ-хавхаланăвĕ çамрăк чĕрере нихăçан та ан иксĕлтĕр.

***АШШĔ, ХУНЯМĂШĔ, МĂШĂРĔ, ЫВĂЛĔПЕ ХĔРĔ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

любимую маму, добрую, отзывчивую, готовую всегда прийти на помощь подругу, коллегу **АНДРИАНОВУ Любовь Арсентьевну** со знаменательным событием – 50-летием. Желаем ей крепкого здоровья, неиссякаемой энергии, успехов в работе, благополучия в семье, всего-всего наилучшего.

Пусть годы мчатся чередой,
Минуя все ненастья.
А мы желаем всей душой
Побольше бодрости и счастья.

***СЫНОВЬЯ АНДРЕЙ И АРТЕМ, ПОДРУГИ, ДРУЗЬЯ И КОЛЛЕГИ.***

**195. КУПЛЮ 1-комн. квартиру в центре п. Ибреси. Тел.: 89278421413, 89276695482.**

**2-1**

**Утерянные паспорт, военный билет, диплом, свидетельство ИНН, страховой полис и др. на имя Сюдамова Юрия Алексеевича, прошу вернуть за вознаграждение по адресу, указанному в документах.**

**САЛОН РИТУАЛЬНЫХ УСЛУГ**

**п. Ибреси, ул. Леспромхозная, д. 18**

**ИМЕЮТСЯ В ПРОДАЖЕ: памятники (мрамор серый, белый, гранит черный, серый, красный), ограды 1-2-3-местные, др. ритуальные принадлежности.**

**ПРИНИМАЕМ заказы на инд. изготовление памятников и оград, срок исполнения – 2 недели.**

**Телефон: 89603022799.**

**Администрация Березовского сельского поселения глубоко скорбит по поводу кончины АНДРЕЕВОЙ Анны Андреевны, много лет проработавшей председателем исполкома сельского совета, и выражает соболезнование родным и близким покойной.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

***Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.***

*Çĕнтерӳшĕн (За победу)*

**Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР**

**Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6**

**ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.**

**Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.**

**Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3176: чув. – 2341, русск. – 835. Зак. №**

**Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ**

**Срок сдачи в печать — 17.00**
**Сдан в печать в 10.00**

**Ответственный за выпуск Тумаланова А. М.**